**Çумăр ташши**

Халь кăна ча-пăчаччĕ
Туп туллии мăн урамра.
Çумăр çитрĕ, ташша ячĕ,
Тарса кĕчĕç самантрах.
Çумăр, çумăр, ах чарусăр –
Лачкам турĕ таврана.
Çĕрĕ нӳрĕ – кирлĕ усă
Парĕ ешĕл калчана…
Кантăках пырса çак çумăр
Ачасене урама
Хăйĕнпеле ташлама
Чĕнчĕ шаккаса: «Час тухăр!»
Çук, тухмарĕç ачасем
Çумăр айне урама, –
Ырчĕç çумăр пĕрчисем,
Вăç та çук-тăр ташлама.
Çумăр куçкĕрет кӳренчĕ, –
Тарчĕ пĕлĕт хӳрешки…
Урам тăршшĕпех кӳленчĕк –
Çумăр маннă куçкĕски.

*Ирхи, Г. Çумăр ташши : [сăвă] / Г. Ирхи // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 370.*